26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
МАРТ
7
ЫТЛАРИКУН
47(6542) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне ЖУКОВА

УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, арми генералӗ ВАТУТИН чирлӗ пирки Совет Союзӗн Маршалӗ Жуков ертсе пынипе, мартӑн 4-мӗшӗнче наступлени пуҫласа янӑ, нимӗҫсен вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ оборонине фронт сарлакӑшӗпе 180 километр таран татнӑ та, икӗ кун хушши ҫапӑҫса, 25 километртан пуҫласа 50 километр таран малалла куҫнӑ.

Ҫав наступленире пирӗн ҫарсем нимӗҫсен тӑватӑ танковӑй, сакӑр пехотнӑй дивизине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, ИЗЯСЛАВЛЬ хулипе пысӑк чугун ҫул станцине, ШУМСК, ЯМПОЛЬ тата ОСТРОПОЛЬ хулисене туртса илнӗ, халӑх пурӑнакан ытти 500 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — КАТРЫНБУРГ, ВЫЖГРУДЕК, ТЕОФИПОЛЬ, БАЗАЛИЯ, КУПЕЛЬ, ЛЯХОВЦЫ, БЕЛОГОРОДКА, АНТОНИНЫ, ВЕЛИКИЕ МАЦЕВИЧИ, ГОРОДИЩЕ ятлӑ пысӑк пунктсем. Халӗ ВОЛОЧИССК чугун ҫул станцийӗ патне илсе пыракан вырӑнсенче ҫапӑҫаҫҫӗ.

Ҫапӑҫусенче ЧЕРНЯХОВСКИЙ генерал-лейтенантӑн, ГРЕЧКО генерал-полковникӑн, ПУХОВ генерал-лейтенантӑн тата ЖУРАВЛЕВ генерал-лейтенантӑн ҫарӗсем, РЫБАЛКО генерал-полковникӑн, тата, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн БАДАНОВӐН танкисчӗсем, артиллери генерал-полковникӗн ВАРЕНЦОВӐН, тата, артиллери генерал-лейтенанчӗн КОРОЛЬКОВӐН артиллерисчӗсем, тата, авиаци генерал-полковникӗн КРАСОВСКИН летчикӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве палӑртса хӑварас тесе, ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «ШУМСКИ», «ИЗЯСЛАВЛЬСКИ», «ЯМПОЛЬСКИ», «ОСТРОПОЛЬСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, мартӑн 5-мӗшӗнче, 23 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици Мускав, 224 тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, нимӗҫсен оборонине татнӑ УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, нимӗҫсен оборонине татнӑ ҫӗрте пулнӑскерсене, ТАВ ТАВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пыракан кӗрешӳре вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи мартӑн 5-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАРТӐН 4-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Мартӑн 4-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем НАРВА хули енче НАРВА хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехри плацдарма аслӑлатасшӑн ҫапӑҫнӑ, тӑшмана унӑн оборонин вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ темиҫе пунктӗнчен хӗссе кӑларнӑ.

ОСТРОВ хули енче пирӗн ҫарсем тӑшманпа ҫапӑҫса ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ, ПАНЕВО, ГУСАКОВО, НЕМОЕВО, ШУБИНА ГОРА, ЕМЕЛЬЯХИНА, СИГОРИНО ятлӑ халӑх пурӑнакан пунктсене туртса илнӗ.

КРИВОЙ РОГ хулинчен кантӑртарахра пирӗн ҫарсем ИНГУЛЕЦ шывӗ урлӑ каҫнӑ та ЗЕЛЕНАЯ, РУДНИК, НИКОЛАЕВКА, РОЗОВКА, ЗАГРАДОВКА ятлӑ ялсене тата ИНГУЛЕЦ, НИКОЛОКОЗЕЛЬСК ятлӑ чугун ҫул станцийӗсене туртса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Мартӑн 3-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 25 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 39 самолетне персе ӳкернӗ.

МАРТӐН 5-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Мартӑн 5-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем НАРВА хули енче НАРВА хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехри плацдарма аслӑлатасшӑн ҫапӑҫнӑ, хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ.

УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем мартӑн 4-мӗшӗнче наступлени пуҫласа янӑ, нимӗҫсен вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ оборонине фронт сарлакӑшӗпе 180 километр таран татса кӗнӗ, икӗ кун хушши ҫапӑҫса, 25 километртан пуҫласа 50 километр таран малалла кайнӑ. Ҫапла татса кӗрсе, фронт ҫарӗсем ИЗЯСЛАВЛЬ хулипе пысӑк чугун ҫул станцине, ШУМСК, ЯМПОЛЬ, ОСТРОПОЛЬ хулисене, Каменец-Подольск облаҫӗнчи ЛЯХОВЦЫ, АНТОНИНЫ, ТЕОФИПОЛЬ, БАЗАЛИЯ ятлӑ район центрӗсене туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 500 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра—ЖОЛОБКИ, КАТРЫНБУРГ, СУРАЖ, ЮРОВКА, ДВОРЕЦ, МИХНОВ, ЖИЛИНЦЫ, ГОРОДИЩЕ, КЛЕМБОВКА, ШУМБОР, УНИЕВ, БЕЛОГОРОДКА, ЧИЖЕВКА, ПОДГАЙЦЕ, ВЯЗОВЕЦ, ПОГОРЕЛЬЦЫ, ПОЛЯХОВА, ТЕРНАВКА, ВОРСУКИ, НАПАДУВКА, ВЫЖГРУДЕК, БЯЛОЗУРКА, СВЯТЕЦ, ШИБЕНО, ЯХНОВЦЫ, КУПЕЛЬ, ДЕНИСОВКА, НОВО-ЛАБУНЬ, САСАНОВКА, ОНАЦКОВЦЫ, ВЕЛИКИЕ МАЦЕВИЧИ, МАРТЫНОВКА, ПРОВАЛОВКА ятлӑ пысӑк ялсем, КЛЕМБОВКА, БЕЛОГОРОДКА, ЖИЗНИКОВЦЫ, СУХОВОЛЯ, ЛЕПЕСОВКА, ЛАНОВЦЫ, БЕРЕЖАНКА, БЯЛКА, ВЫЖГРУДЕК ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем. Халӗ ВОЛОЧИССК чугун ҫул станцийӗ патне илсе пыракан вырӑнсенче ҫапӑҫаҫҫӗ.

Ҫак наступленире УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем нимӗҫсен 4 танковӑй тата 8 пехотнӑй дивизине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗнче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Мартӑн 4-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 136 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 49 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Нарва хули енче пирӗн ҫарсем Нарва шывӗн хӗвеланӑҫ енчи плацдарма аслӑлатасшӑн ҫапӑҫнӑ. Пӗр соединени чаҫӗсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтере-ҫӗнтере тата унӑн контратакисене сире-сире ярса, нимӗҫсен темиҫе тӗреклӗ пунктне йышӑнса илнӗ. Ҫав ҫапӑҫусенче пирӗн ҫарсем нимӗҫсен пехотине пӗр батальон ытла вӗлерсе пӗтернӗ, 11 тупӑ тата йывӑр миномётсен 2 батарейине пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн пӗр чаҫри боецсем 5 тупӑ, 30 пулемет, 400 автоматпа винтовка ытла тата 3 боеприпас склачӗ тытса илнӗ.

* * *

Украинӑри 1-мӗш фронт ҫарӗсем мартӑн 4-мӗшӗнче ирхине артиллери вӑйлӑн хатӗрлесе панӑ хыҫҫӑн наступлени пуҫласа янӑ. Совет артиллерисчӗсемпе минометчикӗсен вӑйлӑ вут-ҫулӑмӗ тӑшманӑн оборона сооруженийӗсене ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, нимӗҫсен вут-ҫулӑм персе тӑракан хатӗрӗсене пусарса лартнӑ. Пирӗн ҫарсем нимӗҫсен вӑйлӑ оборонине фронт сарлакӑшӗпе 180 километр таран татса кӗнӗ те икӗ кун хушши ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн 25 километртан пуҫласа 50 километр таран малалла кайнӑ. Ӑнӑҫлӑ наступление вӑйлатса пырса, Украинӑри 1-мӗш фронт ҫарӗсем Изяславль хулипе пысӑк чугун ҫул станцине, Шумск, Ямполь, Острополь хулисене туртса илнӗ, Каменец-Подольск облаҫӗнчи Ляховцы, Антонины, Теофиполь, Базалия ятлӑ район центрӗсене тата халӑх пурӑнакан ытти 500 пункта ытла йышӑннӑ.

Совет чаҫӗсем пыра-пыра ҫапнипе тӑшман хӑйӗн позицийӗсене пӗрин хыҫҫӑн теприне хӑварса каялла чакать. Пуринчен те хаяр ҫапӑҫусем Белогородка районӗнче пулса иртнӗ. Нимӗҫсем, хӑйсен салтакӗсем темӗн чухлӗ пӗтнине пӑхмасӑр, ҫав пункта хӑйсен аллинче тытса хӑварма хӑтланнӑ, темиҫе хаяр контратака пуҫласа янӑ. Совет танкисчӗсем, пехотинецсемпе бронебойщиксем тата артиллери пулӑшнипе, тӑшмана аркатса тӑкнӑ, нимӗҫсен тарма лекнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче нимӗҫсен персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ 38 танкӗ тӑрса юлнӑ тата тӑшманӑн 2.000 вилли ытла выртса юлнӑ. Ултӑ кӗпҫеллӗ 12 миномет, 34 тупӑ тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. Тепӗр районра пӗр соединени чаҫӗсем 4.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ҫити вӗлерсе пӗтернӗ, 60 танк ытла пӗтерсе тӑкнӑ тата пӗр бронепоезд тытса илнӗ. Тыткӑна нумай илнӗ. Тӑшмана пур участоксенче те ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен питӗ пысӑк ҫухатусем кӳнӗ. Икӗ кун хушшинче нимӗҫсен 4 танковӑй тата 8 пехотнӑй дивизине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Темӗн чухлӗ трофейӑсем тытса илнӗ. Тӑшманӑн ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, каялла чакакан чаҫӗсем хӑйсен артиллерине, боеприпас склачӗсене тата ытти ҫар пурлӑхӗн склачӗсене пӑрахса хӑварнӑ. Пӗр чугун ҫул станцийӗнче кӑна пирӗн боецсем 40 хир тупри, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 2 тупӑ, 56 миномет тата 200 пулемет ытла тытса илнӗ. Паян пирӗн ҫарсем питӗ паха чугун ҫул магистралӗ ҫинчи Волочисск чугун ҫул станцийӗ патне илсе пыракан вырӑнсенче ҫапӑҫаҫҫӗ.

* * *

Баренц тинӗсӗнче пирен разведка тӑшман суднисен караванне курнӑ. Торпеда яракан самолетсемпе штурмовиксем ҫав каравана атакӑланӑ та нимӗҫсен 8.000 тонна таякан суднине, 6.000 тонна таякан суднине тата 700 тонна таякан тральщикне шыва путарнӑ. Кусемсӗр пуҫне, тӑшманӑн 7.000 тонна таякан суднине вут тивертсе янӑ.

* * *

Брест облаҫӗнче кӗрешекен партизансен отрячӗсем пӗр уйӑх хушшинче нимӗҫсен ҫарӗсен темиҫе вунӑ эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. Ҫав крушенисенче 87 паровоза тата ҫарсемпе ҫар хатӗрӗсем турттарса пыракан 600 вагона ытла ҫӗмӗрсе тӑкнӑ е сиенленӗ. Совет патриочӗсем ҫав вӑхӑт хушшинчех 15 кӗпере сирпӗнтерсе янӑ, телефонпа телеграф ҫыхӑнӑвӗн линине 98 километр пӑсса тухнӑ, пӑшалсемпе тата пулеметсемпе персе, тӑшманӑн 3 самолетне ӳкернӗ. Ҫапӑҫусенче тата засадӑсенчен персе, пӗр пин нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла вӗлерне е амантнӑ.

* * *

Никополь хулинчи ҫынсем — Иван Пестеренко, Дарья Панасенко, Зинаида Федорова, Раиса Милецкая тата ыттисем те фашистла нимӗҫ ирсӗрӗсем тунӑ тискер ӗҫсем ҫинчен ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Эпир тар юхтарса пухнӑ пурлӑха нимӗҫ захватчикӗсем пӗтерсе тӑкрӗҫ, совет ҫыннисемшӗн хаклӑ тӑракан мӗнпур ырлӑха таптарӗҫ. Хулана пырса кӗнӗ хыҫҫӑнах нимӗҫсем хулари рабочисене, служащисене тата интеллигентсене хаяррӑн асаплантарма тытӑнчӗҫ. Гитлер вӑрӑ-хурахӗсем хулари ҫынсене куннеҫӗрне пӑхмасӑр арестлерӗҫ, вӗсене ҫырма патне тата вокзал патӗнчи танксене чарма алтнӑ шӑтӑксем патне хӑвала-хӑвала каятчӗҫ. Кунта нимӗҫсем совет ҫыннисене, вӑл шутра хӗрарӑмсемпе пӗчӗк ачасене те, пере-пере пӑрахрӗҫ. Гитлер ҫынҫиенӗсем хӑйсем пуҫ пулса тӑнӑ вӑхӑтра Никополь хулинчи мирлӗ пӗчӗк ачасене те, пере-пере пӑрахрӗҫ. Хулари 7.000 ҫынна ытла нимӗҫсем вӑйпа Германи каторгине хӑваласа кайрӗҫ. Фашистла варварсем хулари чи лайӑх ҫуртсене ҫунтарса ячӗҫ, рабочи поселока кӗл куписем туса хӑварчӗҫ, нумай предприятисене сирпӗнтерсе ячӗҫ. Пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Ҫар ҫав тери хӑвӑрт наступлени туса килни кӑна хулана пӗтӗмӗшпех ишӗлтерсе пӗтерессинчен ҫӑлса хӑварчӗ».

Хӗрарӑмсен Пӗтӗм Тӗнчери Кунӗ— Мартӑн 8-мӗшӗ ҫинчен

ВКП(б) Центральный Комитечӗ йышӑннӑ постановлени

Хӗрарӑмсен Пӗтӗм Тӗнчери Кунне—Мартӑн 8-мӗшне совет хӗрарӑмӗсем 1944 ҫулта Хӗрлӗ Ҫар фашистла нимӗҫ ҫарӗсене ҫӗнтерсе пынӑ историллӗ вӑхӑтра паллӑ тӑваҫҫӗ.

Ҫулталӑк ытла ӗнтӗ Хӗрлӗ Ҫар, гитлерла захватчиксене аркатса тата вӗсене Совет ҫӗрӗ ҫинчен шӑла-шӑла пӑрахса, ҫӗнтерӳллӗ наступлени туса пырать. Хӗрлӗ Ҫар, фашистла нимӗҫ ҫарӗсене татӑклӑ поражениссем тӳстерсе, ҫав тери пысӑк территорие тӑшмантан ирӗке кӑларчӗ, темиҫе вунӑ миллион совет ҫыннине вилӗмрен тата нимӗҫ чуралӑхӗнчен ҫӑлса хӑварчӗ, хамӑрӑн Тӑван ҫӗршыв аллине промышленноҫпа ялхуҫалӑхӗн чи пуян районӗсене тавӑрса пачӗ, халӗ ӗнтӗ Хӗрлӗ Ҫар пӗр пӑркаланмасӑр хамӑрӑн хӗвеланӑҫӗнчи чикӗсем патнелле ҫӗмӗрсе пырать.

Отечественнӑй вӑрҫӑн малтанхи кунӗсенчен пуҫласах совет хӗрарӑмӗсем, хӑйсен мӑшӑрӗсемпе, ывӑлӗсемпе, тӑванӗсемпе алла-аллӑн тӑрса, хамӑрӑн социализмлӑ Тӑван ҫӗршывшӑн, хӗрарӑмӑн Совет стройӗ вӑхӑтӗнче илнӗ пӗртан прависемшӗн тата ирӗклӗхӗшӗн вӑя хӗрхенмесӗр кӗрешеҫҫӗ.

Социализм стройӗ хӗрарӑма обществӑллӑ пурнӑҫӑн пур ӗҫӗсенче те пултаруллӑн ӗҫлеме вӗҫӗ-хӗррисӗр майсем туса пачӗ. Совет влаҫӗн ҫулӗсенче ӗҫхӗрарӑмӗсен пурнӑҫ ырлӑхӗ, культурӑллӑ шайӗ, политикӑллӑ активлӑхӗ калама ҫук вӑйлӑн ӳсрӗҫ.

Совет халӑхӗн ирӗклӗ те телейлӗ пурнӑҫне фашистла нимӗҫ мерзавецӗсем килсе тапӑнчӗҫ. Вӗсем пирӗн халӑха чуралӑха кӗртсе ӳкерме тата вӗлерсе пӗтерме, пирӗн социализмлӑ государствӑпа культурӑна пӗтерсе тӑкма, пирӗн ҫӗршывӑн пуянлӑхӗсене тытса илме хапсӑнчӗҫ. Хӑйсем вӑхӑтлӑха тытса илнӗ районсенче нимӗҫсем каторгӑллӑ, чуралла-крепостникла йӗрке туса хучӗҫ. Нимӗҫсем пирӗн совет ҫыннисем нумай ҫулсем хушши ӗҫлесе тунӑ халӑх пуянлӑхне ҫаратаҫҫӗ, пурӑнмалли ҫурт-йӗрсемпе культура учрежденийӗсене ҫунтараҫҫӗ, ачасене хӗн кӑтартса вӗлереҫҫӗ, хӗрарӑмсен чыслӑхӗнчен ирсӗррӗн мӑшкӑллаҫҫӗ, вӗсене асаплантарса вӗлереҫҫӗ. Фашистла палачсем оккупациленӗ районсенче тытса илнӗ темиҫе ҫӗр пин совет хӗрарӑмӗсемпе хӗрӗсене ирӗксӗрлесе нимӗҫ чуралӑхне хӑваласа кайнӑ.

Ылханлӑ тӑшмана хирӗҫ ҫапӑҫма, хамӑрӑн Тӑван ҫӗршывӑн чыслӑхӗпе ирӗклӗхне тата никама пӑхӑнманлӑхне хӳтӗлеме, пӗтӗм совет халӑхӗпе пӗрле, пирӗн ҫӗршыври хӗрарӑмсем те ҫӗкленчӗҫ.

Европӑна чуралӑха кӗртсе ӳкернӗ нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ ирӗклӗхшӗн пыракан вӑрҫӑра, совет хӗрарӑмӗсемпе пӗр танах, хӑйсен ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ирӗклӗхе юратакан мӗнпур халӑхсен хӗрарӑмӗсем те кунран-кун активлӑнрах кӗрешме тытӑнаҫҫӗ.

Фашизма пӗтӗмӗшпех тата татӑклӑнах ҫапса аркатассишӗн, Тӑван совет ҫӗршывӗн ҫӗнтерӗвӗшӗн пирӗн ҫӗршыври хӗрарӑмсем хӑйсен мӑшӑрӗсемпе ывӑлӗсене тата тӑванӗсене паттӑрла ӗҫсем тума хавхалантараҫҫӗ, вӗсем хӑйсен пӗтӗм вӑйӗсемпе пӗлӗвӗсене тата опытне фронта пулӑшнӑ ҫӗре, ҫӗнтерӳ гунӑ ҫӗре параҫҫӗ.

Вӑрҫӑ пынӑ мӗнпур тапхӑрта пирӗн промышленноҫра ӗҫлекен хӗрарӑм-работницӑсем производствӑри ҫӗнӗ специальноҫсене ӑнӑҫлӑн вӗренсе алла илсе пыраҫҫӗ, фронта пулӑшас тесе ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлеҫҫӗ, Хӗрлӗ Ҫара танксем, самолетсем, орудисем, минометсем, пулеметсем, автоматсем, винтовкӑсем, боеприпассем, снаряжени, тумтирсем ытларах та ытларах парса тӑраҫҫӗ, туса кӑларакан продукци пахалӑхне ывӑнма пӗлмесӗр лайӑхлатса пыраҫҫӗ.

Хӗрарӑм-колхозницӑсем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче колхоз производствинче татса паракан тӗп вӑй пулса тӑчӗҫ. Ҫӗршер пин хӗрарӑм халӗ ӗнтӗ трактористсем, шоферсем, комбайнерсем, МТС-семпе совхозсенчи механиксем пулса ӗҫлеҫҫӗ. Колхоз производствин организаторӗсем пулса ӗҫлекен хӗрарӑмсен нумай йышлӑ кадрӗсем: колхоз председателӗсем, бригадирсемпе фермӑсен заведующийӗсем ӳсе ҫитӗнчӗҫ.

Отечественнӑй вӑрҫӑра рабочисемпе колхозниксене хӗрарӑм инженерсемпе техниксем, агрономсемпе зоотехниксем, наукӑпа искусство работникӗсем, врачсемпе учительсем, совет учрежденийӗсенчи работницӑсем активлӑн пулӑшса тӑраҫҫӗ, вӗсем фронтпа халӑх хуҫалӑхне вӑя хӗрхенмесӗр, ывӑнма пӗлмесӗр пулӑшаҫҫӗ.

Тӑшмантан ирӗке кӑларнӑ районсенчи хӗрарӑмсем хӑйсене ирӗке кӑларакан Хӗрлӗ Ҫара пулӑшассине кунран-кун ӳстерсе пыраҫҫӗ, оккупантсем ишӗлтерсе пӗтернӗ хуласемпе ялсене, хуҫалӑхпа культура учрежденийӗсене юсаса ура ҫине тӑратассишӗн вӑя хӗрхенмесӗр ӗҫлеҫҫӗ.

Ҫӗнтерӳллӗ Хӗрлӗ Ҫар ретӗнче тӑшмана хирӗҫ совет халӑхӗн мухтавлӑ хӗрӗсем—снайперсем, связисткӑсем, зенитчицӑсем, летчицӑсем паттӑррӑн кӗрешеҫҫӗ. Нумай совет патриоткисем Хӗрлӗ Ҫарта врачсем, фельдшерсем, медицина сестрисем, санитаркӑсем пулса хастарлӑн ӗҫлеҫҫӗ. Темиҫе пин паттӑр хӗрарӑмсемпе хӗрсем—партизанкӑсем гитлерла вӑрӑ-хурахсене пӗр хӗрхенмесӗр пӗтерсе пыраҫҫӗ, наступлени туса пыракан Хӗрлӗ Ҫара пур енчен те пулӑшса тӑраҫҫӗ.

Ӗҫхӗрарӑмӗсем Хӗрлӗ Ҫарӑн аманнӑ воинӗсене тимлӗн те ӑшшӑн пӑхаҫҫӗ, ашшӗ амӑшне ҫухатнӑ тӑлӑх ачасемшӗн тӑван амӑшӗсем пек тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫамрӑк ӑрӑва пӑхса ҫитӗнтерме государствӑна пулӑшаҫҫӗ. Совет хӗрарӑмӗсем-донорсем хӑйсен юнне совет боецӗсемпе офицерӗсен хаклӑ пурнӑҫӗсене сыхласа хӑварма параҫҫӗ.

Вӑрҫӑ совет хӗрарӑмӗсене, пӗтӗм совет халӑхне хушнӑ пекех, тылпа фронтра паттӑрла, геройла ҫӗнӗ ӗҫсем тума, фашистла нимӗҫ захватчикӗсене хӑвӑртрах тата пуҫӗпех ҫапса аркатас тесе татах та ытларах вӑй хурса кӗрешме хушать.

ВКП(б) Центральный Комитечӗ мӗнпур парти организацийӗсене Хӗрарӑмсен Пӗтӗм Тӗнчери Кунне—Мартӑн 8-мӗшне Хӗрлӗ Ҫара пулӑшассине малалла ӳстерес, гитлерла Германие ҫӗнтерес куна ҫывхартас тӗллевпе массӑллӑ-политикӑллӑ пысӑк кампани ирттерме хушать. Парти организацийӗсен мӗнпур ӗҫхӗрарӑмӗсене ҫакӑн ҫинчен анлӑн ӑнлантарса парас пулать: кашни совет патриоткин ҫӗнтерӳшӗн татах та ытларах вӑй хурса ӗҫлемелле, фронт валли чи лайӑх хӗҫпӑшалпа боеприпассем туса кӑларассине, ҫарпа ҫӗршыв валли—продовольстви, промышленность валли—чӗртавар парса тӑрассине ӳстерсех пымалла. Парти, совет, профсоюз, комсомол организацийӗсем производствӑра ӗҫлеме хӗрарӑмсене кунран-кун ытларах явӑҫтарса пыма, хӗрарӑмсене производство ӗҫне вӗрентессишӗн, вӗсене политикӑллӑ воспитани парассишӗн, обществӑллӑ производствӑра ӗҫлекен хӗрарӑмсен пурнӑҫпа йӑлари нушисене тивӗҫтерсе пырассишӗн тӑрӑшма, малта пыракан хӗрарӑмсемпе хӗрсене совет, хуҫалӑх тата общество организацийӗсенчи ертсе пырас ӗҫсене куҫарса пыма, вӗсене ӗҫре ӳсмешкӗн пулӑшса пыма тивӗҫлӗ.

Хӗрарӑм-работницӑсем, инженерсемпе техниксем! Хӑвӑрӑн ӗҫ техникине лайӑх вӗренсе алла илӗр, ӗҫ тухӑҫлӑхне кунран-кун ӳстерсе пырӑр! Фронта пулӑшассишӗн ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлӗр! Наступлени туса пыракан Хӗрлӗ Ҫара хӗҫпӑшал, боеприпассем, снаряжени, тумтирсем, ытларах та ытларах парса тӑрӑр! Вӑрҫӑра кирлӗ продукци пахалӑхне ывӑнма пӗлмесӗр лайӑхлатса пырӑр!

Хӗрарӑм-железнодорожницӑсем! Вӑя хӗрхенмесӗр, пӗр тикӗс ӗҫлесе, наступлени туса пыракан Хӗрлӗ Ҫара ҫитӗнӳсем тума пулӑшӑр! Ҫарсем, вӑрҫӑра тата халӑх хуҫалӑхӗнче кирлӗ грузсем турттаракан поездсене хӑвӑртрах ҫӳретӗр! Чугун ҫулсем ҫинче ҫар дисциплинине ывӑнма пӗлмесӗр ҫирӗплетсе пырӑр! Нимӗҫсем ишӗлтернӗ чугун ҫулсене, чугун ҫул кӗперӗсемпе ҫурт-йӗрсене, шыв парса тӑрассине тата ҫыхӑнӑва хӑвӑртрах юсаса йӗркелӗр!

Хӗрарӑм-колхозницӑсем, МТС-семпе совхозсенчи работницӑсем! Ҫуракине кӑтартуллӑн хатӗрлесе, ӑнӑҫлӑн ирттерӗр! 1944 ҫулта вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн кӗрешӗр! Тракторсемпе комбайнсене тытса пырас ӗҫӗн техникине алла илӗр! Выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхне пур майсемпе те ӳстерсе пырӑр! Фронтпа ҫӗршыва ытларах апат-ҫимӗҫ, промышленноҫа—чӗртавар ытларах парӑр!

Хӗрарӑмсем—наукӑпа искусство тата литература работникӗсем, учительсем, медицина работникӗсем, агрономсем, зоотехниксем, совет учрежденийӗсенчи работницӑсем! Хамӑр халӑх хуҫалӑхне малалла ӳстерсе пырас ӗҫре рабочисемпе колхозниксене пулӑшса тӑрӑр, совет наукипе культурине малалла аталантарса пырӑр! Хамӑр государство аппарачӗн пур сыпӑкӗсене те тӗрӗс те тикӗс ӗҫлемелле тӑвӑр! Мӗнпур вӑй—фронта пулӑшнӑ ҫӗре, хамӑрӑн ҫӗнтерӗве ҫывхартас ӗҫе парӑр!

Нимӗҫ захватчикӗсенчен ирӗке кӑларнӑ совет районӗсенчи хӗрарӑмсем! Хуласемпе ялсене, промышленноҫпа транспорта, ялхуҫалӑхне, культурӑпа пурнӑҫра кирлӗ ытти учрежденисене, гитлерла вӑрӑ-хурахсем аркатса пӗтернӗскерсене, хӑвӑртрах юсаса ҫитерсе ура ҫине тӑратӑр! Ҫулсене юсӑр! Наступлени туса пыракан Хӗрлӗ Ҫара пур майсемпе те пулӑшса тӑрӑр!

Хӗрарӑм-зенитчицӑсем, снайперсем, летчицӑсем, связисткӑсем! Хӑвӑрӑн ҫапӑҫури ӑсталӑха ывӑнма пӗлмесӗр лайӑхлатса пырӑр, нимӗҫ захватчикӗсене пӗр хӗрхенмесӗр вӗлере-вӗлере пӗтерӗр!

Хӗрарӑм-врачсем, фельдшерсем, медицина сестрисем, санитаркӑсем! Аманнӑ боецсемпе офицерсен пурнӑҫӗсене ҫӑлса хӑварассишӗн, вӗсене строя таврӑссишӗн вӑя хӗрхенмесӗр кӗрешӗр! Хӑвӑрӑн мӗнпур вӑйӑрсемпе пӗлӗвӗрсене Хӗрлӗ Ҫарӑн аманнӑ воинӗсене пулӑшнӑ ҫӗре парӑр!

Хӗрарӑм-партизанкӑсем! Наступлени туса пыракан Хӗрлӗ Ҫара пулӑшассине пур майсемпе те вӑйлатӑр! Тӑшман ҫарӗсене вырӑнтан вырӑна куҫарассине, хӗҫпӑшалсемпе боеприпассем турттарассине аркатса, чара-чара лартӑр! Партизансем паракан боевой заданисене вӑя хӗрхенмесӗр пурнӑҫа кӗртсе пырӑр!

Хӗрарӑмсемпе хӗрсем! Вӑрҫӑ ӗҫне вӗренсе алла илӗр! Тӗл пеме вӗренӗр! Сывлӑшран тапӑннинчен тата химиллӗ тапӑнуран сыхланас ӗҫе вӗренӗр! Хамӑрӑн мӗнпур вӑйсене гитлерла захватчиксене пӗтӗмпех ҫапса аркатас ӗҫе парар!

Фашистла нимӗҫ вӑрӑ-хурахӗсем вӑхӑтлӑха тытса илнӗ совет районӗсенчи хӗрарӑмсем! Сире ирӗке кӑларас сехет ҫывхарса килет! Нимӗҫ захватчикӗсене пӗтерсе пыма партизансен отрячӗсене пулӑшса тӑрӑр! Нимӗҫ каторгине хӑваласа каяссинчен пытанса юлӑр! Наступлени туса пыракан Хӗрлӗ Ҫара пӗтӗм вӑйпа, мӗнпур майсемпе пулӑшса тӑрӑр!

Этемлӗхӗн чи тискер тӑшманӗсене—фашистла нимӗҫ пусмӑрҫисене хирӗҫ кӗрешекен ирӗклӗхе юратакан халӑхсен хӗрарӑмӗсене тӑванла салам! Ирӗклӗхе юратакан халӑхсен мӗнпур вӑйӗсемпе кӗрешӳри хӑватне гитлерла Германие хӑвӑртрах ҫапса аркатнӑ ҫӗре парар!

Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗ хӗрарӑмсене — работницӑсене, инженерсемпе техниксене, колхозницӑсене, хӗрарӑм-агрономсемпе зоотехниксене, учительсене, врачсене, наукӑпа искусство работникӗсене, медицина работникӗсене, хӗрарӑм-снайперсене, связисткӑсене, летчицӑсене, зенитчицӑсене, мухтавлӑ партизанкӑсене, Совет Союзӗнчи мӗнпур ӗҫхӗрарӑмӗсене Хӗрарӑмсен Пӗтӗм Тӗнчери Кунӗ — Мартӑн 8-мӗшӗ ячӗпе саламлать тата ҫакна ҫирӗп шанса тӑнине палӑртать: хамӑрӑн Тӑван ҫӗршыва фашистла нимӗҫ захватчикӗсенчен пӗтӗмӗшпех тасатса ҫитерес тата тӑшмана пуҫӗпех ҫапса аркатас ӗҫе совет хӗрарӑмӗсем хӑйсен мӗнпур вӑйӗсемпе пӗлӗвӗсене парӗҫ.

Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен)
Партийӗн Центральный Комитечӗ.

Ҫулпуҫ приказне ӗҫпе ответлеҫҫӗ

ҪЕМӖРЛЕ, мартӑн 6-мӗшӗ. (Телефонпа). Комбинатри рабочисемпе работницӑсем Верховный Главнокомандующий Сталин юлташӑн Хӗрлӗ Ҫар 26 ҫул тултарнӑ ятпа панӑ приказне сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн, ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартма пулса, ҫӗнӗ обязательствӑсем илнӗччӗ.

Халӗ вӗсем ҫав обязательствӑсене чыслӑн пурнӑҫлассишӗн социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса ячӗҫ. Павлов, Димин юлташсем ертсе пыракан цехсем февраль уйӑхӗнчи задание срокчен 5 кун малтан пурнӑҫларӗҫ.

Комбинат коллективӗ февраль уйӑхӗнче пӗр йышши продукци туса кӑларас плана 109,6 процент пурнӑҫларӗ.

Сталин ячӗпе тӑракан артиллери заводӗн коллективӗ пӗлсе каланипе хапӑл туса йышӑнса, тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисем валли запаслӑ пайсем тума панӑ 1944 ҫулӑн пӗррӗмӗш кварталӗнчи задание мартӑн 10-мӗшӗ тӗлне пурнӑҫлама пулчӗҫ. Паянхи куна комбинат коллективӗ тракторсем валли запаслӑ пайсем тумалли плана 94 процент чухлӗ пурнӑҫларӗ.

И. СЛУЦКИЙ,
Комбинатӑн главнӑй инженерӗ.

СССР орденӗсене пани

Ӗнер, мартӑн 4-мӗшӗнче, СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. И. Калинин юлташ Верховный Главнокомандующи панӑ заданисене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртсе пынӑшӑн наградӑланӑ генералсен ушкӑнне орденсем панӑ. Ф. И. Голиков генерал-полковника, М. С. Громадин генерал-полковника тата И. В. Смородинов генерал-полковника 1-мӗш степень Кутузов орденне панӑ, артиллери генерал-лейтенантне В. В. Аборенкова, артиллери генерал-лейтенантне П. А. Дегтярева тата А. А. Грызлов генерал-лейтенанта 2-мӗш степень Кутузов орденне панӑ, И. И. Ильичев генерал-лейтенанта Хӗрлӗ Ялав орденне панӑ. (ТАСС).

РСФСР-ăн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕ

РСФСР-ăн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕн 1944 çулхи мартăн 4-мĕшĕнчи ларăвĕ çинчен

ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРӲ

Мартăн 4-мĕшĕнче, кăнтăрла 12 сехетре, РСФСР Верховный Совечĕн ларусем пулакан залĕнче, Кремльте, РСФСР-ăн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕн пиллĕкмĕш ларăвĕ пулса иртнĕ.

Ларăва РСФСР Верховный Совечĕн Председателĕ **А. А. Жданов** депутат ертсе пынă.

Старейшинăсен Совечĕ хушнă тăрăх, **Жданов** юлташ РСФСР Верховный Совет Председателĕн заместителĕсен хисепне сакăр çын таран ӳстерме сĕнет. Верховный Совет Председателĕн иккĕ заместитель кăна пулни сессисен ĕçĕсене ертсе пыма çителĕклĕ мар; заместительсен хисепне ӳстерни сессисене ертсе пырас ĕçе лайăхрах пурнăçлама, сесси ĕçĕсем вăхăтĕнче делегацисемпе тата депутатсемпе лайăхрах çыхăнса тăма май парать.

Жданов юлташ Старейшинăсен Совечĕн ячĕпе РСФСР Верховный Совет Председателĕн заместителĕсем пулма çак депутатсене суйлама сĕнет: Магрифа Закиевна **Мавлютювăна** (Пушкăрт АССР), Виктор Иванович **Недосекина** (Свердловск облаçĕ), Василий Гаврилович **Грабина** (Горьки облаçĕ), Пелагея Ивановна **Ивановăна** (Удмурт АССР), Сергей Николаевич **Гидаева** (Мордва АССР), Николай Григорьевич **Табакова** (Краснодар крайĕ). РСФСР Верховный Совечĕ **М. З. Мавлютова, В. И. Недосекин, В. Г. Грабин, П. И. Иванова, С. Н. Гидаев, Н. Г. Табаков** юлташсене пĕр саслă пулса РСФСР Верховный Совет Председателĕн заместителĕсем пулма суйланă.

Унтан РСФСР Верховный Совечĕ кун йĕркинчи пĕрремĕш ыйту тăрăх докладчикăн — РСФСР Финанс Халăх Комиссарĕн А. А. Посконов юлташăн тата содокладчикăн — РСФСР Верховный Совечĕн Бюджет Комиссийĕн Председателĕн И. А. **Власов** депутатăн юлашки сăмахĕсене итленĕ.

РСФСР Верховный Совечĕ РСФСР-ăн 1944 çулхи государство бюджетне пĕр саслă пулса çирĕплетнĕ. Кашни статьине уйрăм пулса, унтан пĕтĕмĕшле тата пĕр хăрăс пулса тухса, сесси «Российăн Советлă Федерациллĕ Социализмлă Республикин 1944 çулхи государство бюджечĕ çинчен калакан закона» çирĕплетнĕ.

РСФСР Верховный Совечĕ кун йĕркинчи иккĕмĕш ыйтăва — РСФСР-ăн союзлă республикăллă Оборона Халăх Комиссариатне тата РСФСР-ăн союзлă республикăллă Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатне тăвас ыйтăва сӳтсе-явма тытăннă.

Ку ыйту тăрăх доклада РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ А. Н. **Косыгин** юлташ тунă.

Косыгин юлташ докладĕ тăрăх пренире çак депутатсем тухса каланă: **Б. Х. Бумагин** (Кингисепп округĕ, Ленинград облаçĕ), **Г. А. Динмухаметов** (Кукмор округĕ, Тутар АССР), **Д. М. Пигалев** (Ворошилов округĕ, Сталинград облаçĕ), **А. Л. Рубичев** (Шацк округĕ, Рязань облаçĕ), **В. П. Пронин** (Ростокин округĕ, Мускав хули).

Хирĕç калас текенсем пулман пирки, Косыгин юлташ юлашки сăмах каламан.

РСФСР Верховный Совечĕ «РСФСР-ăн союзлă республикăллă Оборона Халăх Комиссариачĕ тăвасси çинчен калакан закона» тата «РСФСР-ăн союзлă республикăллă Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕ тăвасси çинчен калакан закона» пĕр саслă пулса çирĕплетнĕ.

Çав законсене йышăннă хыççăн Верховный Совет **П. С. Попков** депутат Старейшинăсен Совечĕ ячĕпе тухса сĕннине, **А. Е. Бадаев** юлташа, вăл урăх ĕçе куçни пирки, РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн ĕçĕсенчен хăтарасси çинчен решени йышăннă.

Старейшинăсен Совечĕн ячĕпе **Попков** юлташ РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ пулма **Н. М. Шверник** юлташа суйлама сĕнет.

Верховный Совет Николай Михайлович **Шверник** юлташа РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ пулма пĕр саслă пулса суйлать.

В. П. Пронин депутат Старейшинăсен Совечĕн ячĕпе **И. А. Власов** юлташа РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн пĕрремĕш заместителĕ пулма суйлама сĕнет.

Верховный Совет Иван Алексеевич **Власов** юлташа пĕр саслă пулса РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн пĕрремĕш заместителĕ пулма суйлать.

Çакăнпа РСФСР Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕн ĕçĕсем пĕтнĕ.

Мартăн 4-мĕшĕнчи лару

Мартăн 4-мĕшĕнче 12 сехетре РСФСР-ăн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕн пиллĕкмĕш ларăвĕ уçăлнă. Председатель сĕтелĕ хушшинче — РСФСР Верховный Совечĕн Председателĕ **А. А. Жданов** депутат, РСФСР Верховный Совет Председателĕн заместителĕсем **А. Х. Тынчеровпа М. В. Сарычева** депутатсем. Ложăсенче — РСФСР Верховный Совет Президиумĕн членĕсемпе РСФСР Халăх Комиссарĕсем.

Председатель пулса ертсе пыраканĕ—РСФСР Верховный Совечĕн Председателĕ **А. А. Жданов** депутат Старейшинăсен Совечĕ хушнипе РСФСР Верховный Совет Председателĕн заместителĕсен хисепне 8 çынна çити ӳстерме сĕнӳ парать. Верховный Совет Председателĕн иккĕ заместителĕ пулни сесси ĕçĕсене ертсе пыма çителĕклĕ мар, заместительсен хисепне ӳстерни сессисене ертсе пырас задачăна лайăхрах пурнăçлама тата сесси ĕçленĕ вăхăтра делегацисемпе тата депутатсемпе лайăхрах çыхăнса тăма май парать.

Çак сĕнĕве пĕр саслă пулса йышăнаççĕ.

РСФСР Верховный Совет Председателĕн заместителĕсем пулма пĕр саслăн çак депутатсене суйланă: **М. З. Мавлютова** (Пушкăрт АССР-ĕ) **В. И. Недосекин** (Свердловск облаçĕ), **В. Г. Грабин** (Горьки облаçĕ), **П. И. Иванова** (Удмурт АССР-ĕ), **С. Н. Гидаев** (Мордва АССР-ĕ), **Н. Г. Табаков** (Краснодар крайĕ).

РСФСР Верховный Совет Председателĕн заместителĕсем пулма çĕнĕрен суйланисем Председатель сĕтелĕ хушшине кĕрсе лараççĕ.

Председатель пулса ертсе пыраканĕ РСФСР-ăн 1944 çулхи государство бюджечĕ çинчен тунă доклад тăрăх тата бюджет комиссийĕн содокладĕ тăрăх пренисене вĕçлесси пирки сĕнӳ пулни çинчен пĕлтерет. Ку сĕнĕве йышăнаççĕ.

Кун хыççăн РСФСР Финанс Халăх Комиссарĕ **А. А. Посконов** юлташ юлашки сăмах тухса калать.

— РСФСР-ăн государство бюджечĕ, — тет Посконов юлташ, — пирĕн çĕршывăн экономикăпа финанс хăвачĕ ӳснине уççăн кăтартса парать, ăна сессире пурте ырларĕç. Тухса калакан депутатсем, пурте пĕр çын пек пулса, пирĕн бюджет тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкас тĕлĕшпе Сталин юлташ лартнă историллĕ задачăна пурнăçа кĕртме, пирĕн республикăн хуçалăхĕпе культурине малалла аталантарса пыма тата ирĕке кăларнă облаçсенчи хуçалăха юсаса ура çине тăратма май пани çинчен каларĕç.

Малалла **Посконов** юлташ, сессире РСФСР Финанс Халăх Комиссариачĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене тĕрĕс критиклενине палăртса, Финанс Халăх Комиссариачĕ хăйĕн малашнехи ĕçĕнче çав çитменлĕхсене пĕтерĕ тесе калать.

РСФСР Верховный Совечĕн бюджет комиссийĕ государство бюджечĕн доход пайне 152.213 пин тенкĕ ӳстерме сĕнӳ пачĕ. РСФСР Совнаркомĕ хушнипе, **Посконов** юлташ бюджет комиссийĕ панă сĕнӳпе Совнарком килĕшни çинчен пĕлтерет.

Кун хыççăн хăшпĕр депутатсем халăх хуçалăхне хывмалли, нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи хуçалăха юсаса ура çине тăратнă çĕре тата уйрăм облаçсемпе крайсем, республикăсем тăрăх социаллă-культурăллă мероприятисене ирттернĕ çĕре расходламалли укçа-тенкĕ хисепне ӳстерес енĕпе панă сĕнӳсене йышăнаççĕ. РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **Батамиров** (Тула облаçĕ), **Староторжский** (Калинин облаçĕ), **Ищенко,** (Ростов облаçĕ) депутатсем хăйсен облаçĕсенче гитлеровецсем ишĕлтернĕ хуçалăха юсамашкăн укça-тенкĕ ытларах уйăрса пама ыйтнине тивĕçтерме май пур тесе шутлать. **Измайловăпа Куприянов** депутатсем ыйтнипе Тутар АССР-ĕнчи хуласене юсама çĕнĕрен 1 миллион тенкĕ, Мордва республикинче строительство ĕçĕсене тума 1150 пин тенкĕ хушса памалла тунă.

Çапла вара, депутатсем панă сĕнӳсене пăхса тухнă хыççăн, РСФСР правительстви хуçалăхпа культура мероприятийĕсене пурнăçа кĕртме çĕнĕрен 18.010 пин тенкĕ хушса пама май пур тесе шутлать. РСФСР-ăн 1944 çулхи государство бюджечĕ, пĕтĕмпе илсен, доходсем енĕпе 24.740.487 пин тенкĕ чухлĕ, расходсем енĕпе 24.591.824 пин тенкĕ чухлĕ пулать, урăхла каласан, доходсем расходсенчен 148.663.000 тенкĕ чухлĕ ытларах пулаççĕ.

Посконов юлташ 1944 çулхи бюджета ăнăçлăн пурнăçлас тесен, çĕршывăн мĕнпур ресурсĕсене мобилизацилеме кирли, чĕртаварсемпе тата материалсемпе лайăхрах усă курма кирли, ĕç тухăçлăхне малалла ӳстерсе пыма кирли çинчен калать. Çакна май государство укçи-тенкине перекетлĕн тыткалас ыйту çивĕччĕн тухса тăрать.

— Россия Федерацийĕн государство бюджетне пурнăçа кĕртни, — тет **Посконов** юлташ, — Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ ертсе пынипе тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма тата татăклă çĕнтерӳ тума пулăшать.

Çак сăмахсене залра ларакансем пурте тăвăллăн алă çупса кĕтсе илеççĕ.

Кун хыççăн бюджет комисси председательне **И. А. Власов** депутата сăмах параççĕ. Вăл бюджет комиссийĕ РСФСР Совнаркомĕ, депутатсем панă сĕнӳсемпе килĕшсе, хуçалăха хывмалли укçа-тенкĕне 18.010.000 тенкĕ чухлĕ ӳстерме сĕннине ырлани çинчен пĕлтерет тата РСФСР Верховный Советĕнчен çав укçа-тенкĕне РСФСР-ăн 1944 çулхи государство бюджечĕн расход пайне кĕртсе хăварма ыйтать.

Малалла сесси бюджета çирĕплетме тытăнать.

РСФСР Верховный Совечĕ Российăн Советлă Федерациллĕ Социализмлă Республикин государство бюджечĕ çинчен калакан Закона пĕр саслă пулса, нумайччен алă çупса йышăнать.

Сесси кун йĕркинчи иккĕмĕш ыйтăва—РСФСР-ăн союзлă республикăллă Оборона Халăх Комиссариатне тата РСФСР-ăн союзлă республикăллă Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатне тăвасси çинчен сӳтсе-явма тытăнать. Председатель пулса ертсе пыраканĕ **А. А. Жданов** депутат доклад тума РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательне **А. Н. Косыгин юлташа** сăмах парать.

—СССР Верховный Совечĕн Х-мĕш сессийĕ, — тет **Косыгин юлташ**, — 1944 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнче Оборона Халăх Комиссариатне тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатне союзлă комиссариатсенчен союзлă республикăсенчи халăх комиссариачĕсем тăвасси çинчен калакан Законсем йышăнчĕ. СССР Верховный Совечĕн сессийĕ йышăннă законсем союзлă республикăсене çĕнĕ правăсем параççĕ тата вĕсем умне хамăр çĕршывăн оборонине тĕреклетес тĕлĕшпе те, çавăн пекех ют çĕршывсемпе çыхăну тытас енĕпе те çĕнĕ задачăсем лартаççĕ.

ССР Союзĕн Верховный Совечĕн Х-мĕш сессийĕнче тунă докладра Молотов юлташ çапла каланă:

«Ĕç кунта иккĕ Халăх Комиссариатне яланхи пек урăхлатса йĕркелесси çинчен мар пырать. Ĕç, чи малтан, союзлă республикăсем умне ответлă çĕнĕ задачăсем лартасси çинчен пырать. Пĕррремĕшĕнчен, хамăрăн çĕршыва сыхлас тĕлĕшпе, тата иккĕмĕшĕнчен, ют çĕршыв государствисемпе тулашри çыхăнусем тытас тĕлĕшпе союзлă республикăсен çĕнĕ задачисемпе прависем пирки ыйту лартнă, çавна май вара пирĕн союзлă государствăра кирлĕ улшăнусем туса ирттересси çинчен ыйту лартнă».

Союзлă республикăсен прависене сарни политика тĕлĕшĕнчен пысăк вырăн йышăнса тăрать. ССР Союзĕн Верховный Совечĕн Х-мĕш сессийĕ йышăннă законсем пирĕн республикăсен ĕçĕсене аслăлатма май параççĕ, вăл законсем союзлă республикăсен интересĕсемпе тата пĕтĕм Совет Союзĕн интересĕсемпе килĕшсе тăраççĕ.

Çар формированийĕсем тăвас тĕлĕшпе союзлă республикăсен прависене аслăлатни, союзлă республикăсене ют çĕршыв государствисемпе тӳрремĕнех дипломатиллĕ çыхăнусем тытма полномочисем пани Совет Союзĕн хăвачĕ ӳссе пынин результачĕ пулса тăрать.

ССР Союзĕн Верховный Совечĕ государствăра çĕнĕ улшăнусем туса ирттересси çинчен йышăннă законсем ленинла-сталинла наци политики çĕнĕ çĕнтерӳ тунине. Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ çирĕпленсе пынине палăртса тăраççĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче пирĕн Тăван çĕршыв çине тапăннă ирсĕр тăшмана хирĕç пыракан кĕрешӳре совет халăхĕсен туслăхĕ йывăр тĕрĕслӳ тӳссе ирттерсе, татах та ытларах ӳссе çирĕпленчĕ.

Гитлерăн вăрă-хурахĕсем Европăри нумай çĕршывсене çăмăллăн çĕмĕрсе тăкнă хыççăн тĕнчери чи мирлĕ те чи демократиллĕ государствăна—Совет Союзне «çиçĕмле хăвăртлăхпа» пĕтерсе тĕкма шутланă. Анчах вĕсем хытă йăнăшрĕç. Гитлерла авантюристсем истори урокĕсене манса кайнă.

Вырăс çыннисем, вырăс çĕрĕн никама пăхăнманлăхĕпе ирĕклĕхĕ умне пĕтес хăрушлăх, унти халăхсене чуралăха кĕрсе ӳкес хăрушлăх тухса тăрсан, ялансах захватчиксене хирĕç кар-тăра çĕкленнĕ те вĕсене аркатса тăкнă. Кашни вырăс çынни нимĕç захватчикĕсем Тăван çĕршывне пĕтĕм чунĕпе юратас туйăма, тăшмана хаяррăн курайми туйăма çыхласа усрать.

Русь тата Россия ячĕпе яланах паттăрлăхпа хăюлăх, хастарлăхпа чыслăх, Тăван çĕршывшăн пурнăçа пама хатĕр пулни таччăн çыхăнса тăрать.

Ирĕклĕ те пĕр тан правалăлă халăхсен государствине, çынна çын пусмăрласине яланлăхах пĕтернĕ социализмлă обществăна тунă, халăх социализмлă индустри аталантарнă государствине — Совет Союзне ĕмĕрлĕхе пĕтерес тата план нимĕç фашисчĕсем кăна пулма пултарнă. Пирĕн çĕршыва пĕр çемьене пĕрлештернĕ халăхсем Ленин — Сталин ялавĕпе халăхсен Тăван çĕршывне — Совет Союзне хӳтĕлеме хастарлăн çĕкленчĕ. Германи империализмĕн [illegible] империалистсем тата [illegible] хирĕç кĕрешме ирĕклĕ юратакан мĕнпур демократиллĕ государствисене хирĕç «хĕресле походне» организацилеме шутланă. Пурнăçра пачах урăхла пулса тăчĕ, Совет Союзне ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсем юратаççĕ кăна мар, нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешме ССР Союзĕнчи, Великобританири, США-ри халăхсем таччăн пĕрлешрĕç.

Гитлеровецсен хăватлă çар машини ултавлăн тапăннине Хĕрлĕ Çар хăй çине илсе, тăшмана малалла кайма чарса лартрĕ, хамăрăн Тăван çĕршывăн столицине — Мускав хулине хӳтлесе хăварчĕ, нимĕç вăрă-хурахĕсене Сталинград патĕнче аркатса тăкрĕ, захватчиксене Çурçĕр Кавказран, Ростов облаçĕнчен, Краснодар крайĕнчен тасатрĕ, Курск, Орел, Воронеж, Мускав, Смоленск облаçĕсене ирĕке кăларчĕ. Хĕрлĕ Çар Ленинград патĕнче аслă çĕнтерӳ турĕ, вăл Ленинград хулине тăшман хупăрласа тăнине пĕтерчĕ, халĕ Ленинград тата Калинин облаçĕсен территорийĕсене тăшмантан ăнăçлăн тасатса пырать. Пирĕн Хĕрлĕ Çар, хаяррăн çапăçса, тăванла республикăсен — Украинăпа Белоруссин территорийĕсене нимĕç вăрă-хурахĕсенчен тасатать. Çулталăк ытла ĕнтĕ вăл, нимĕç захватчикĕсене çĕмĕрсе, наступлени туса пырать. Хĕрлĕ Çар нимĕçсем тытса илнĕ совет территорин 3/4 пайне яхăн тăшманран тасатрĕ. Пирĕн тăван республикăсене — Эстони, Латви, Литва, Молдаван тата Карело-Финн республикисене ирĕке кăларас кун та инçе мар.

ССР Союзĕн Верховный Совечĕ союзлă республикăсенче çар формированийĕсем тăвасси çинчен йышăннă закон союзлă республикăсене хамăрăн Хĕрлĕ Çара малалла çирĕплетес ĕçре ытларах пулăшма май парать.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче мĕнпур совет халăхĕсем хăйсен Тăван çĕршывне юратнине нихçанхинчен лайăхрах кăтартса пачĕç. Совет çĕршывне хӳтĕлесси мĕнпур совет халăх ывăлĕсен таса тивĕçĕ, мухтавлă та чыслă ĕçĕ пулса тăчĕ.

Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Совет Союзĕнчи кашни халăх хăйĕн ретĕнче пултаруллă тата хастарлă çар руководителĕсем, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре чапа тухнă çар руководителĕсем ӳстерсе çитĕнтерчĕ. Пирĕн Тăван çĕршыври мĕнпур халăхсен воинĕсем хăйсен пултарулăхне çапăçу хирĕсенче кăтартса параççĕ, вĕсем çĕнтерӳ ăсталăхне ывăнма пĕлмесĕр ӳстерсе пыраççĕ. Союзлă республикăсенче çар формированийĕсем туни союзлă республикăсенчи халăхсене хăйсен нациллĕ пысăк пултарулăхне тата халăхсен вăрçă ĕçĕнчи традицийĕсене кăтартма майсем туса парать.

Çар формированийĕсем тăвасси çинчен калакан закон Россия Федерацийĕшĕн политика тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăрать. Российăн Советлă Федерациллĕ Социализмлă Республики нациллĕ автономлă республикăсене пĕрлешнĕ нумай халăхсене пĕтĕçтерсе тăрать. Вăл халăхсенчен нумайĕшĕсем патша Российинче колониллĕ тата çур-ха колониллĕ халăхсем пулнă.

Паллах ĕнтĕ, патша правительстви çав халăхсене хĕçпăшал шанса пама пултарайман. Вăл халăхсенчен нумайĕшĕсене, сăмахран бурятсене, якутсене, тутарсен пĕр пайне, çурçĕрти чылай халăхсене тата çавăн пекех Çурçĕр Кавказра пурăнакан халăхсенчен нумайĕшĕсене çар службине илмен. Совет стройĕ кăна мĕнпур халăхсене политикăпа экономика тата культура тĕлĕшĕнчен аталанса пыма условисем туса пачĕ. Нумай нациллĕ Совет Союзĕнчи государство ĕçне йĕркеленĕ çĕрте çирĕппĕн пурнăça кĕрсе пынă ленинла-сталинла наци политики халĕ çар ĕçĕнче те анлăн сарăлĕ.

ССР Союзĕн Верховный Совечĕ йышăннă закон тăрăх, пирĕн республикăра Хĕрлĕ Çарăн формированийĕсене тăвас ĕçе ертсе пыма Оборона Халăх Комиссариатне организацилемелле. Çав Халăх Комиссариачĕн республика правительствипе пĕрле çар формированийĕсем тăвас тĕлĕшпе кăна мар, шкулсемпе аслă шкулсенче çар ĕçне вĕрентессине малалла çирĕплетсе тата лайăхлатса пырас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем тумалла. Çак ĕçре чи малтанах РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн, автономлă республикăсенчи совнаркомсемпе Çутĕç Халăх Комиссариачĕсен, çавăн пекех тата ĕççынни депутачĕсен облаçсенчи тата хуласенчи Совечĕсен исполкомĕсен паллă вырăн йышăнмалла. Иккĕленмелли çук, совет органĕсем çав пысăк задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртĕç.

Хĕрлĕ Çара урăхлатса йĕркелени государство ĕçĕнче çав тери пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çав улшăнусене туни совет халăхĕсен туслăхне çирĕплетме, çĕршывăн оборона тĕрекне тата паттăр Хĕрлĕ Çарăн хăватне ӳстерме, çапла вара, пирĕн Тăван çĕршыв çине тапăннă гитлеровецсен кĕтĕвĕсене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма пулăшать.

Депутат юлташсем! Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче Совет Союзĕн чапĕ çӳле çĕкленчĕ. Совет государстви ют çĕршывсемпе тытакан çыхăнусем çирĕпленчĕç тата тăтăшах сарăлса пыраççĕ. Пуриншĕн те паллă, пирĕн Великобританипе туслă çыхăнусем кăна мар, союзлă çыхăнусем те пур. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе те пирĕн çавăн пек лайăх çыхăнусем пулса тăчĕç. Совет Союзĕпе Великобритани тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Гитлера хирĕç кĕрешме хăватлă коалици туса хучĕç.

ССР Союзĕн Верховный Совечĕ союзлă республикăсене тулашри çыхăнусем тĕлĕшпе полномочисем парасси çинчен кăларнă закон союзлă республикăсенчи халăхсен интересĕсене кăна мар, çавăн пекех тата ют çĕршывсенчи ирĕклĕхе юратакан, Совет Союзĕпе туслă пурăнма тăрăшакан халăхсен интересĕсене те тивĕçтерме май парать.

Союзлă республикăсене ют çĕршыв государствисемпе тӳрремĕнех çыхăну тытма тата вĕсемпе килĕшӳсем тума, пĕр-пĕрин патне дипломатипе консул представителĕсем яма правăсем пани — ленинла-сталинла наци политикин пĕтĕм тĕнчешĕн паллă çĕнтерĕвĕ пулса тăрать. «Совет влаçĕн çак утăмĕ, — терĕ Молотов юлташ, — фашизма тата унăн этемлĕхе курайман политикине, халăхсем наци тĕлĕшĕнчен ирĕклĕн аталанса пырассине çав тери хирĕç пыракан политикине моральпа политика енчен çĕнтерсе пырса çапни пулса тăрать».

Пирĕн союзлă республикăсем кутаранччен ют çĕршывсенчи государствăсемпе тӳрремĕнех çыхăнса тăма пултарайман, вăл ĕçе йăлтах пĕтĕм союзри Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕ туса пынă. Ют çĕршывсенчи государствăсемпе тăвакан пĕтĕм договорсемпе килĕшӳсене Совет Союзĕн ячĕпе тунă.

Совет Союзĕн пĕтĕм тĕнчери çыхăнăвĕсем ăнăçлăн аталанса пыни тата туслă государствăсемпе тытакан çыхăнусем сарăлса пыни вăл çыхăнусем халĕ ĕнтĕ çителĕксĕр пулнине, вăл çыхăнусем союзлă республикăсенчи халăхсен хуçалăхĕпе культурин хăйне уйрăм ыйтăвĕсене кирлĕ пек тивĕçтерме çителĕксĕр пулнине тата ют çĕршывсемпе çыхăнса тăрас ĕçе вăйлатма кирлине кăтартса пачĕç. Çакна ăна союзлă республикăсене ют çĕршыв государствисемпе тӳрремĕнех çыхăнса тăма право парсан кăна организацилеме пулать. Ют çĕршыв государствисемпе тӳрремĕнех çыхăнса тăрас тĕлĕшпе ĕçлеме пирĕн республикăра Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатне тумалла.

Пирĕн Россия Федерацийĕ союзлă республикăсем хушшинче чи пысăк республика пулса тăрать. Вăл, халăх хисепĕ енĕпе илсен, Германирен 1,5 хут, Италирен 2 хут, Францирен 2 хут ытларах, Турцирен 6 хут ытларах пысăк шутланать. Çавăнпа та ĕнтĕ ют çĕршывсемпе çыхăнса тăрас ыйту пирĕн республикăшăн пурнăçра кирлĕ ыйту пулса тăрать.

Депутат юлташсем, РСФСР Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕнче йышăнма тивĕçлĕ паха решенисем—çар формированийĕсем тăвасси тата тулашри çыхăнусене организацилесси çинчен калакан решенисем большевиксен партийĕ тата аслă çулпуç Сталин юлташ таврă нихăçанхинчен те таччăнрах пĕтĕçнĕ совет халăхĕн шухăш-кăмăлĕсене палăртса тăраççĕ. **(Тăваллăн алă çупаççĕ).** Çав решенисем хамăрăн Тăван çĕршывăн хăвачĕпе чапне малалла çирĕплетсе пыма, тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма, çапла вара пĕтĕм тĕнчере мирлĕ пурнăç туса хума пулăшĕç. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Кун хыççăн сесси **Косыгин** юлташ докладне сӳтсе-явма тытăнать.

Пренире тухса каланă **Г. Х. Бумагин, Г. А. Динмухаметов, Д. М. Пигалев, А. Т. Рубичев,** тата **В. П. Пронин** депутатсем, сессие çирĕплетме тăратнă законсене ырласа, РСФСР-ти союзлă республикăн Оборона Халăх Комиссариатне тата РСФСР-ти Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатне туни ленинла-сталинла наци политикипе килĕшсе тăнине тата нумай нациллĕ государствăна малалла çирĕплетсе пырас тĕллевпе таччăн сыхăнса тăнине палăртрĕç.

Сесси РСФСР-ăн союзлă республикăн Оборона Халăх Комиссариатне тата РСФСР-ăн союзлă республикăллă Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатне тăвасси çинчен калакан Законсене пĕр саслăн йышăнать. Депутатсемпе хăнасем çав законсене йышăннине тăваллăн алă çупса саламлаççĕ.

Сессин кун йĕркинчи виççĕмĕш ыйту тăрăх сĕнӳсем пама **П. С. Попков** депутат сăмах илет. Вăл, Старейшинăсен Совечĕ хушнипе, **А. Е. Бадаев** юлташа, вăл урăх ĕçе куçнă пирки, РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕнчен хăтарасси çинчен сессире пăхса тухма сĕнӳ парать. Старейшинăсен Совечĕ хушнипе, **Попков** юлташ РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ пулма **Н. М. Шверник** депутата суйлама сĕнет.

Сесси Николай Михайлович **Шверник** юлташа Российăн Советлă Федерациллĕ Социализмлă Республикин Верховный Совечĕн Президиумĕн Председателĕ пулма пĕр саслă суйлать. Депутатсемпе хăнасем РСФСР Верховный Совет Президиумĕн çĕнĕрен суйланă Председательне **Н. М. Шверник** юлташа нумайччен тăваллăн алă çупса саламлаççĕ.

Старейшинăсен Совечĕ ячĕпе сĕнӳ пама **В. П. Пронин** депутат сăмах илет. РСФСР Верховный Совет Президиумĕн ĕçĕсем пысăкланнине кура, вăл РСФСР Верховный Совет Президиум Председателĕн пĕрремĕш заместительне суйлама сĕнет. Старейшинăсен Совечĕ ячĕпе вăл РСФСР Верховный Совет Президиум Председателĕн заместителĕ пулма **И. А. Власов** депутата суйлама сĕнет.

РСФСР Верховный Совет Президиум Председателĕн пĕрремĕш заместителĕ пулма тăваллăн алă çупса Иван Алексеевич **Власов** депутата суйлаççĕ.

Председатель пулса ертсе пыраканĕ — РСФСР Верховный Совечĕн Председателĕ **А. А. Жданов** депутат РСФСР Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕн кун йĕркинчи ыйтусене пурне те пăхса тухни çинчен пĕлтерет. Çакăнпа РСФСР Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕ хăйĕн ĕçĕсене пĕтерет. (ТАСС).

ТАСС опроверженийĕ

Шведсен «Гетеборгс Постен» ятлă хаçачĕ, ют çĕршывсен Лондонра пурăнакан политика деятелĕсем калаççĕ тесе, çапла пĕлтерет: Совет Союзĕ Финляндие сĕннĕ перемири условийĕсенче вăрттăн параграф пур, тет. Çав параграфра Финляндири нимĕç çарĕсемпе пĕрле тăракан австриецсен иккĕ дивизине Финляндирен кăлармасăр тытса чăрасси çинчен уйрăм условисем кăтартса панă пулать.

ТАСС çакăн пек пĕлтерме полномочи илнĕ: «Гетеборгс Постен» хаçат Совет Правительствин сĕнĕвĕсенче вăрттăн параграф пур тесе пĕлтерни вăл пĕтĕмпех суя

ГЕРМАНИ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕНЧЕ ĔÇЛЕКЕН ЮТ ÇĔРШЫВ РАБОЧИЙĔСЕМ ЙЫШЛĂН ТАРНИ

ГЕТЕБОРГ, мартăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен «Гетеборгс Хайдельстиднинг» ятлă хаçачĕ çакăн пек хыпар пичетлесе кăларнă, юлашки уйăхсенче Германи предприятийĕсенче ĕçлекен ют çĕршыв рабочийĕсем йышлăн тарни палăрать. Юлашки хыпарсем тăрăх, Гитлерăн полици влаçĕсем 50.000 рабочие шыраççĕ, çав ют çĕршыв рабочийĕсем пурте хăйсем ĕçленĕ предприятисенчен пăрахса тарнă. Çавăн пек пăрахса тарасси ытла та сарăлса кайнă пирки çав ĕçе пĕтерес тесе гестапо вăрттăн ĕçлекен отдел туса хунă.

Ответлă редакторăн заместителĕ **А. А. ЭСХЕЛЬ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00051 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6, 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.